25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
АПРЕЛЬ
18
ШĂМАТКУН
91(6026) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Отечественнăй вăрçă заемĕн калама çук паха ӳсĕмĕ

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне, отечественнăй вăрçă заемне, малтан палăртнă хисеп чухлĕ вырнаçтарса çитерчĕ. Икĕ кун хушшинче пĕтĕмпе, апрелĕн 15-мĕшне кĕртсе шутласан, заема 10 миллиард тенкĕлĕх ытла çыранса илнĕ. Нимĕн иккĕленмелли те çук, совет халăхĕ хăйĕн правительствине палăртса хушнинчен нумай ирттерсе укçа-тенкĕ парĕ. Вăл ĕнтĕ плана ирттерсе тултарчĕ. Заема çыранса илесси малалла пулса пырать. Çакă вăл пирĕн отечественнăй вăрçăри çĕнĕ çĕнтерӳ пулса тăрать. Çакă вăл питех те паха çĕнтерӳ, мĕншĕн тесен заема халиччен пулман кĕске срокра, икĕ кун хушшинчех вырнаçтарса çитерчĕ. Çакă ĕнтĕ пĕтĕм совет халăхĕ пĕр кăмăллă пулнине, унăн патриотла çĕкленĕвне кăтартса парать. Совет халăхĕ хăй тăшмана çĕнтерессине пĕр иккĕленмесĕр шанса тăрать, çав çĕнтерĕве тăвас тесе, вăл пĕтĕм вăйне хурать. Çакăнта ĕнтĕ унăн çирĕп кăмăлĕ. Çакăнпа вĕресе тăрать унăн чĕри.

Заем çыранса илмелли кунсем ялан савăнăçлă кунсем пулса тăнă. Совет гражданинĕ хăйĕн государствипе тачă çыхăнса тăни, социализмлă строительствăн тата совет культурин ӳсĕмĕсемпе совет гражданинĕ хавасланни çак кунсенче уйрăмăнах вăйлăн палăрса тăчĕ. Халăх хăйĕн тăван Хĕрлĕ Çарне юратни çак кунсенче уйрăмăнах палăрчĕ, совет халăхĕсен тăванла туслăхĕ пур çĕртен те, пирĕн аслă тăван çĕршывăн пур республикисенчен те заем пирки килекен хĕрӳллĕ хыпарсенче курăнчĕ.

Çапла пулнă мирлĕ вăхăтра. Совет халăхĕн тăшманĕсем пирĕн çĕршывăн ӳсĕмне, хăватне тата пĕрлĕхне кăтартса паракан çак манифестаци çине хаяррăн та чĕтресе пăхса тăнă. Çак пĕрлĕхе пăсса яма, совет халăхĕн ретĕсене пăтраштарма, совет государствин хăватне хавшатма вĕсене май килĕ тесе вĕсем хăйсене юмахри пек шухăшпа лăплантарса пурăннă. Тăшманăн çак тасамар шухăшĕсене, унăн ирсĕр ĕмĕчĕсене 1942 çулти заемăн питех те паха ăнăçлăхĕ аркатса ямалла пырса çапать. Гитлеризм тата тепĕр пысăк йăнăш турĕ.

1942 çулти заем вăл—вăрçă заемĕ, отечественнăй аслă вăрçă заемĕ. Ăна халăхшăн питех те йывăр обстановкăра, пирĕн умра пысăк хăрушлăх тăнă вăхăтра кăларнă.

Тăшман вăрă-хурахла тапăнни пирки пирĕн халăхăн йывăр испытанисем тӳсме лекет. Анчах халăхăн патриотла çĕкленĕвĕ питĕ вăйлă. Тăван çĕршыва хӳтĕлеме, тăшмана çĕмĕрсе тăкма мĕн кирлине пама хатĕр тăракан пирĕн халăхăн хаваслăхĕ питĕ вăйлă. Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕнчен хисеплĕрехки совет халăхĕшĕн урăх нимĕн те çук. Хăрушă вăрçăн хаяр условийĕсенче совет халăхĕ мирлĕ вăхăтсенче пулнă хаваслăхран нумай вăйлăрах хаваслăх кăтартрĕ. Çак кунсенчи çĕкленӳллĕ самантсемпе пуйăмсене нихăçан та манма çук. Пĕтĕм совет çĕрĕ тăрăх, фронтра та тылра та, совет çыннисем хăйсен тивĕçне хавасăн пур- [illegible]

[illegible]

ляндире заема çыранса илнин хурлăхлă результачĕсемпе танлаштарсан заем ăнăçлăхĕн пĕтĕм тĕнчери пĕлтерĕшĕ уйрăмăнах уççăн палăрса тăрать. Государствăн заемĕ çав çĕршывсенче путланса ларнă.

1942 çулти мартăн 1-мĕшĕнче Финляндири фашистла правительство 2 миллиардлă хисеппе государство заемне кăларчĕ. 20 кун хушшинче заемăн виçĕ пайĕнчен пĕр пайне çеç кăна вырнаçтарнă, чăннипе илсен, заем сарас ĕç çакăнпа чарăнса ларчĕ. Фашистла хаçатсем заем çинчен ахалех кăшкăрашрĕç, вĕсем ăна ахалех мухтаса пĕтерчĕç: заем облигацине хăйсем пĕр банксем кăна çыранса илнĕ. Халăх ун çине тăшманла пăхрĕ. Вăл заема бойкот турĕ. Финсем ылханлă вăрçа туса пыма Маннергейм—Рюти шайкинчи авантюристсене укçа парасшăн мар. Вĕсем вăрçа малалла туса пырасшăн мар.

Румынири военнăй заем та çавăн пекех путланса ларчĕ, ăна иртнĕ çулти августрах кăларнă пулнă. Облигаци хакĕсене йӳнетсе паратпăр тесе правительство халăха ахалех астарчĕ. Заема çыранса пĕтермелли срока тăваттăмĕш хут ĕнтĕ куçарса пыраççĕ. Румыни халăхĕ захватчикла вăрçа туса пыма укçа-тенкĕ памасть тата памĕ те.

Гитлерла блокăн ытти çĕршывĕсенче те финанс енĕпе ĕçсем лайăххах мар. Гитлерăн захватчикла вăрçине туса пыма халăх укçа-тенкĕ памасть. Çак вăрçа халăх ирĕкне хирĕç туса пыраççĕ. Тискеррĕн ирĕксĕрлесе кăна, террорпа кăна Гитлер тата унăн тарçисем халăхран укçа-тенкĕ илме, вăрçă валли тупă кăлайĕ тума пултараççĕ. Гитлеровецсем хăйсемех йышăннă тăрăх, нимĕç халăхĕ пăшăрханса тата хăраса тăнă вăхăтра, вăрçăпа кăмăлсăр пулнине нимĕç халăхĕ хыттăнрах та хыттăнрах палăртнă вăхăтра, влаçра тăракан авантюристла ушкăнсемпе халăхăн вăранса пыракан массисем хушшинче хирĕçӳсем тарăнланса пынă вăхăтра фашистла Германири военнăй заем ăнăçлă пулма пултарать-и-ха ĕнтĕ?

Вăрă-хурахла, çаратуллă вăрçа туса пыни пирĕн противниксен çĕршывĕсенчи вăйсене сапаласа ярать, вĕсене вăйсăрлатать. Вăл вăрçă пур çĕрте те «шалти фронта» туса хурать, вăл Гитлерăн тылне тĕрексĕрлетет, Хĕвеланăç Европăна йăсăрлататакан вулкан туса хурать. Румынипе Финляндире заем путланса ларни вăл— Гитлерăн стратегиллĕ тата политикăллă планĕсем путланса ларнин результачĕ, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче вăл поражени тӳснин результачĕ. Çавăнпа пĕрлех вăл—ресурссем, резервсем пĕтсе çитнин результачĕ те, экономикăпа финанс путланса ларассине, татах та вăйлăрах вылăх, юхăну пулассине систерекенĕ те пулса тăрать.

Вăрçă заемĕ совет çĕршывĕнче паха ӳсĕм туни вăл—совет халăхĕн пĕрлĕхне, тылпа Хĕрлĕ Çарăн çыхăнăвне тата çирĕплĕхне, совет халăхĕ фронтпа тăванла пĕтĕçсе тăнине кăтартса пара- [illegible]

[illegible]

(«Правда», апрелĕн 17-мĕшĕнчи ум. статьинчен).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

ССР Союзĕн минометнăй вооружени Наркоматĕн К. Маркс ячĕпе тăракан заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинче

[illegible] Правительство панă [illegible] СССР Союзĕн минометнăй вооружени Наркоматĕн К. Маркс ячĕпе тăракан заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăлас. [illegible]

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти апрелĕн 16-мĕшĕ.

Тăван çĕршыв умĕнчи хамăрăн граждăнла тивĕçе пурнăçлар—пурте пĕр çын пек пулса военнăй заема çыранса илер!

Заема икĕ кун хушшинче ытлашшипех сарнă

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне, кăçалхи апрелĕн 14-мĕшĕнче 10 миллиард тенкĕлĕх кăларнăскерне, апрелĕн 15-мĕшне кĕртсе шутласан, урăхла каласан, икĕ кун хушшинче 10.068.000.000 тенкĕлĕх сарнă. Çакă вăл заема 68 миллион тенкĕлĕх ирттерсе сарнине пĕлтерет.

Заема çыранса илес ĕç малалла пырать.

СССР Финанс Халăх Комиссарĕ А. ЗВЕРЕВ.

ЗАЕМА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ САРНИН МАЛТАНХИ ИТОГĔСЕМ

Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне сарас ĕç малалла пулса пырать. Апрелĕн 17-мĕш тĕлне республикипе заема 59.409.000 тенкĕлĕх сарнă, вăл шутран рабочисемпе служащисем хушшинче 23.320.000 тенкĕлĕх, колхозниксемпе единоличниксем хушшинче 25.962.000 тенкĕлĕх, колхозсемпе артельсенче 10.127.000 тенкĕлĕх сарнă. Шупашкарти ĕççыннисем заема 6.057.000 тенкĕлĕх çыраннă.

Заема вырнаçтарнипе пĕрлех укçа пухасси те анлăн пулса пырать. Ку тĕлĕшпе çак районсем малта: Сĕнтĕр—1.678.000 тенкĕ, Вăрмар—1.380.000 тенкĕ, Хĕрлĕ Чутай—1.376.000 тенкĕ, Шăхасан—1.262.000 тенкĕ, Елчĕк—1.261.000 тенкĕ, Чкаловски—1.182.000 тенкĕ, Советски —1.097.000 тенкĕ, Тăвай—1.023.000 тенкĕ пухнă. Республикăра заем укçине 23.807.000 тенкĕ пухнă.

Пысăк çĕкленӳ

ТĂВАЙ, апрелĕн 17-мĕш. (Телефонпа). Правительство çĕнĕ заем кăларнине районри ĕççыннисем çавтери хастарлăн кĕтсе илчĕç. Пур çĕрте те кĕске митингсемпе пухусем пулса иртрĕç. ВКП(б) райкомĕпе МТС политотделĕ ĕççыннисене заем çинчен ăнлантарса пама 32 докладчик ячĕç.

Районра заема вырнаçтарас ĕç хĕрӳллĕн пырать. Апрелĕн 17-мĕш тĕлне заема пурĕ 1.225.000 тенкĕлĕх сарнă, 1.023.847 тенкĕ укçине пухнă.

Заем çыранас ĕç уйрăмăнах «Красная Чувашия», «Пламя», «Искра», «Социализм», Чапаев тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсенче лайăх иртрĕ. Паянхи куна подписка укçине «Красная Чувашия» колхозра 80 пин тенкĕ, Ленин ячĕпе тăракан колхозра 65 пин тенкĕ тата «Пламя» колхозра 43 пин тенкĕ пухнă.

МТС трактористсем заем укçине 25 пин тенкĕ тӳлерĕç. Хайдуков, Макаров, Чернов, Петров бригадирсем, Антонова, Иванова, Александрова тата Федорова трактористкăсем заема 1.000—1.500-шер тенкĕлĕх çыранса, укçине те пĕтĕмпех парса татрĕç.

А. САЛМИН.
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

В. ЧЕРНОВ.
МТС политотдел начальникĕ.

Кольцовка колхозĕ çĕнĕ заема 30 пин тенкĕлĕх çыранса, укçине тӳлесе татнă

ВĂРНАР. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхозри колхозниксемпе колхозницăсем 1942 çулти Военнăй Заема пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç. СССР Совнаркомĕн постановленине итленĕ хыççăн колхозниксен пухăвĕ пулса иртрĕ. Çĕнĕ заема колхозниксемпе колхозницăсем 73.235 тенкĕлĕх çыранса илсе, подписка укçине те çавăнтах тӳлесе татрĕç. Пуху колхозăн пĕрлешӳллĕ фондĕнчен 1942 çулти Военнăй Заема 30 пин тенкĕлĕх çыранса илме йышăнчĕ, укçине те çав кунах сберкассăн счечĕ çине куçарнă. Колхоз председателĕ Васянин юлташ çĕнĕ заема 4000 тенкĕлĕх çыранса, укçине те çавăнтах пачĕ.

1942 çулти Военнăй Заема районри ытти колхозсем те пысăк хавхаланупа çыранаççĕ. Сендимиркăри «Гигант» колхоз председателĕ Чернышов юлташ 1500 тенкĕлĕх, фермăсен заведующийĕсем А. Андреевпа И. Иванов юлташсем 1500-шер тенкĕлĕх, виçĕ красноармеецăн ашшĕ — 63 çулти колхозник В. Кузьмин 1000 тенкĕлĕх çыранчĕç.

Çавалкас Хирпуçĕнчи «Колхозница» колхоз членĕсем çĕнĕ заема 12.550 тенкĕлĕх çыранса, укçине 7.625 тенкĕ çавăнтах тӳлерĕç.

— Эпĕ инвалид, суккăр. Совет влаçĕ пулман пулсан, манăн мĕскĕн пурнăçпа пурăнмалла пулатчĕ. Халĕ эпĕ çителĕклĕ, хисеплĕ пурнăçпа пурăнатăп. Çĕнĕ заем çĕршывăн тĕреклĕхне çирĕплетнĕ çĕре каять. Манăн пĕчĕк укçа та тăван çĕршыв оборонин хăватлăхне пысăк вăй патăр, — тесе каларĕ Н. Морозов колхозник. Вăл çĕнĕ заема 300 тенкĕлĕх çыранчĕ.

В. МАКСИМОВ.

Тăван çĕршыва юратнине кăтартаççĕ

ЕЛЧĔК. (Телефонпа). Районри ĕççыннисем Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне пурте пĕр çын пек çыранса, тăван çĕршыва юратнине, хамăрăн ирĕклĕхпе чыслăхшăн нимĕн те шеллеменнине кăтартаççĕ. Машинăпа тракторнăй станцинче ĕçлекенсем хушшинче çĕнĕ заема 80.070 тенкĕлĕх сарса, укçине 64.246 тенкĕ пухса панă. Кунти трактор бригадисем заема кашниех 5.000 тенкĕлĕх çыраннă.

Вăрçă вăхăтĕнчи заема вырнаçтарас ĕçре фронтовиксен арăмĕсем ырă тĕслĕхсем кăтартаççĕ. «Красный партизан» колхозри красноармеецсен арăмĕсенчен Воробьева, Андреева юлташсем заема 500-шер тенкĕлĕх, Михайлова юлташ 1.000 тенкĕлĕх çыранса, укçине пĕтĕмпех парса татнă. 60 çулти колхозница, виçĕ красноармеецăн амăшĕ, Казакова юлташ заема 500 тенкĕлĕх çыранса, укçине çавăнтах тӳленĕ.

И. ВАСИЛЬЕВ.
ВЛКСМ Елчĕк райкомĕн секретарĕ.

КОЛХОЗНИКСЕН АКТИВЛĂХĔ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. (Телефонпа). Районра çĕнĕ заема 1.715.000 тенкĕлĕх сарнă, вăл шутран 1.357.000 тенкĕ укçине пухнă. Заем укçине пухас ĕç уйрăмăнах колхозниксем хушшинче ăнăçлăн пырать. Вĕсем 1.035.000 тенкĕ пухнă та ĕнтĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи заема вырнаçтарас тĕлĕшпе «Крестьянин», «Трудовик» тата ВКП(б) ячĕпе тăракан колхозсем лайăх ĕçлерĕç. Вĕсенче кашниччех заема 20-шер пин тенкĕлĕх сарса, укçине те пĕтĕмпех пухса çитерчĕ.

Заем çыранас ĕçре ялсенчи активистсем пример кăтартаççĕ. Сăмахран, «Мотор» колхозăн председателĕ П. Шалтайкин юлташ 1 300 тенкĕлĕх, Калинин ячĕпе тăракан колхоз председателĕн заместителĕ А. Краснов юлташ 1000 тенкĕлĕх çыранса, укçине те çийĕнчех тӳлесе татнă.

Е. БАЗРАНОВ.
Районри перекет кассин заведующийĕ.

Макаç ялсовечĕ малта пырать

СĔНТĔРВĂРРИ. (Телефонпа). Государствăн 1942 çулти Военнăй Заемне сарас тата унăн укçине пухас тĕлĕшпе районра Макаç ялсовечĕ малта пырать. Унта çĕнĕ заема 61 пин тенкĕлĕх сарнă, çавăн чухлех укçине те пухнă. Ялсовет председателĕ Владимиров юлташ заем сарас ĕçре пултаруллăн ĕçлет.

Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çĕнĕ заема 37 пин тенкĕлĕх çыранчĕç. Унсăр пуçне колхоз хăй заемăн процентлă кăларăмне 15 пин тенкĕлĕх çыранчĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи заема вырнаçтарас тĕлĕшпе районри предприятисемпе учрежденисем те лайăх ĕçлерĕç. Вĕсенчен уйрăмăнах аптекăн, Госбанкăн районри отделенийĕн, ачасен çуртĕн коллективĕсене палăртмалла.

Е. КУЗНЕЦОВ.
Районри перекет кассин заведующийĕ.

Икĕ уйăхри ĕçукçи чухлĕ çыраннă

ШАМАРША. Районĕпе çĕнĕ заема 1.085.000 тенкĕлĕх сарнă, подписка укçине 580 пин тенкĕ пухнă.

Заем кампанийĕ Сталин ячĕпе тăракан колхозра аван пырать. Кунта заема 24.380 тенкĕлĕх çыранса, укçине пĕтĕмпех пухса панă. «Красный воин» колхоз членĕсем заема 17.000 тенкĕлĕх, «Трнер» колхоз членĕсем 10 360 тенкĕлĕх çыранса, укçине çийĕнчех хывнă.

Райпромкомбинатра ĕçлекенсенчен вăрçă вăхăтĕнчи заема çыранмасăр пĕр çын та юлман, чылайĕшĕсем уйăхри ĕçукçинчен ирттерсе çыраннă. Комбинат директорĕ Крикин, рабочисем Коновалов тата Корчагин юлташсем икĕ уйăхри ĕçукçи чухлĕ çыраннă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 16-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 16-мĕшĕнче фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

Апрелĕн 14-мĕшĕнче нимĕçсене малтан пĕлтернĕ пек 14 самолет мар, 20 самолет пĕтерсе тăкнă.

Апрелĕн 15-мĕшĕнче нимĕçсен 32 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

* * *

Апрелĕн 15-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскисемпе грузсем турттарса пыракан 30 яхăн автомашинине, 7 полевой тата зенитнăй орудине, зенитнăй пулеметсен 2 точкине тата 8 минометне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

* * *

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем, противника хирĕç çапăçса, юлашки икĕ кун хушшинче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Пирĕн боецсем капитан Зеленский командир пулса ертсе пынипе (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ), тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, гитлеровецсене халăх пурăнакан çирĕплетнĕ пунктран хăваласа кăларнă. Çухатнă позицисене каялла тавăрас тесе нимĕçсем темиçе хутчен те хăтланса пăхнă, анчах та вĕсене кашнинчех пысăк çухатусем курсе каялла сире-сире пăрахнă.

* * *

Куприянов юлташ командир пулса ертсе пыракан часть (Калинин фрончĕ) противникăн контратакине ăнăçлăн сирсе янă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсен 450 вилли выртса юлнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть çĕрлехи çапăçура противник оборонин питĕ кирлĕ пунктне йышăнса илнĕ. Гитлеровецсен салтакĕсене питех те нумай пĕтерсе тăкнă тата амантнă. Противникран 3 оруди, 25 пулемет, 150 винтовка, 3 радиостанци тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшал тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Красноармеец-снайпер Д. Третьяк 3 уйăх хушшинче 65 фашиста пĕтерсе тăкнă.

* * *

Тăшманăн огневой позицисене тĕплĕн пĕлес тесе разведка туна чухне Бирюков сержант командир пулса ертсе пыракан 11 красноармеец çине нимĕçсен 50 салтакĕ тапăннă. Паттăр красноармеецсем танмар çапăçăва пĕр хăрамасăр йышăннă. Красноармеец Малахов юлташ, автоматран темиçе черет персе, тăшманăн пулемечĕн расчетне пĕтерсе тăкнă. Вара çавăн хыççăн разведчиксем тăшман çине атакăна ыткăннă. Нимĕçсем чăтса тăма пултарайман, тарнă. Противника йĕрлесе хăваласа пырса, разведчиксем нимĕçсен 30 салтакне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Нимĕçсен 268-мĕш пехотнăй дивизийĕн 168-мĕш полкĕнчи 7-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ обер-ефрейтор Вильгельм Цвингель çапла каласа панă: «Февраль уйăхĕнче Байрейт хулинчен фронта 1.200 çынран тăракан маршевăй батальон ячĕç. Эпĕ те çав батальона лекрĕм. Вăл батальонра пĕтĕмпех унччен çар заводĕсенче ĕçлекен рабочисемччĕ. Пире кĕске вăхăт хушшинчех фронта яма хатĕрлесе çитерчĕç, çав вăхăт хушшинче пире, пуринчен ытла, винтовкăран пеме вĕрентрĕç. Пĕрремĕш çапăçурах эпир пысăк çухатусем тӳсрĕмĕр. 7-мĕш ротăна лекнĕ 50 резервистран тăваттăн 10 çын кăна юлчĕ. Анчах та ку хутра çăлăнса юлнă резервистсен те тăван киле тĕрĕс-тĕкел таврăнас шанчăк пĕтсе ларчĕ. Хам эпĕ киле вилес умĕнхи юлашки çыру та çырса ятăм, мĕншĕн тесен мана кунсене шутласа хунă тесе шухăшларăм. Ун чухне çавăн пек çырусем çапăçу пĕтсенех ытти нумай салтаксем те çырчĕç. Тепĕр кунне вырăссем каллех атака пуçласа ячĕç. Пирĕн рота каялла чакрĕ, эпĕ çав вырăнтах юлтăм та тыткăна парăнтăм».

* * *

Нимĕçсен ефрейторĕ Рихард Приферт Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче тăракан ефрейтор Гергардт Бекман патне нумаях пулмасть Парижран çапла çыру янă: «...Юлашки вăхăтра кунта лăпкă мар пула пуçларĕ. Пирĕн ротăран темиçе салтака вĕлерчĕç. Эсĕ шухăшла-ха, вĕсене халăх нумай çӳрекен вырăнсенчех вĕлерчĕç. Пирĕн çав салтаксене хăшне-пĕрне метро станцийĕсенче платформăн тепĕр енче кĕç-вĕç поезд çитсе тăрас умĕнхи вăхăтрах персе вĕлерчĕç. Çапла хăтланнăшăн французсене нумай персе пăрахрĕç. Анчах та çавăн пек тапăнусем тек пулмĕç тесе кам шутлама пултарать?»

* * *

Румынире 1941 çулти август уйăхĕнчех кăларнă военнăй заем пысăк намăспа путланса ларнă. Халăха заем ăнăçлăн иртнĕ пек кăтартасшăн пулнипе влаçсем ирĕксĕрех çапла пĕлтернĕ: заем облигацийĕсене хакне нумай чакарса сутаççĕ, тенĕ. Анчах та апла хăтланни те пулăшман. Заем питех те сахал сарăннă. Заем çыранса илмелли срока тăваттăмĕш хут куçарчĕç. Темĕн чухлĕ ӳкĕтлесен те, хĕсĕрлесен те, Гитлер хĕтĕртнипе ерсе кайнă вăрă-хурахла вăрçа Румыни халăхĕ пĕрре те пулăшасшăн мар.

Апрелĕн 17-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 17-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле фронтра нимĕнле паллă улшăнусемех те пулман.

Пирĕн карапсем Баренц тинĕсĕнче противникăн 10.000 тонна водоизмещениллĕ танкерне путарнă.

* * *

Симонов юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Ленинград фрончĕ) противника пысăк сиен кӳнĕ. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 2 пулемет, 2 миномет, винтовкăсемпе автоматсем нумай, 11.000 винтовка патронĕ, 5 ещĕк снаряд, 10 ещĕк тар, 370 мина тата 250 ручной граната. Çапăçура кĕçĕн лейтенант Моисеевăн подразделенийĕ паттăррăн кĕрешнĕ. 300 ытла гитлеровец контратака тума хăтлансан, совет войскисем вĕсене штыкпа хирĕç тăрса кĕтсе илнĕ. Пуçланса кайнă тытăçура нимĕçсен, вилнисене шутласан кăна, 120 салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ.

* * *

Иовлев юлташ командир пулса ертсе пыракан часть (Хĕвеланăç фрончĕ) пĕр кун хушшинчи çапăçусенче противникăнне 24 пулемет, 2 миномет тата ытти тĕрлĕ хĕçпăшалсем тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен 200 яхăн вилли выртса юлнă.

* * *

Нимĕçсен икĕ танкĕ Мошков сержантăн отделенине атакăланă. Пирĕн боецсем противника çывăха янă та ун çине танксене хирĕç пемелли пăшалсенчен пеме тытăннă. Малтанхи хут персех тăшманăн пĕр танкне çĕмĕрнĕ. Тепĕр танкĕ каялла çавăрăннă.

* * *

Гнедаш юлташăн танкĕ питĕ вăйлăн пырса нимĕçсем йышăнса илнĕ яла çĕмĕрсе кĕнĕ. Пулеметсемпе тупăсенчен персе, танк экипажĕ нимĕç захватчикĕсене 100 çынна çити пĕтерсе тăкнă тата гусеницăсемпе таптаса противникăн танксене хирĕç пемелли 2 орудине, 4 станковăй пулеметне çĕмĕрнĕ.

* * *

Миронов командирăн оруди расчечĕ гӳррĕн лектерсе пĕр кун хушшинче нимĕçсен танкне, пулеметсен 6 точкине миномeтсен батарейине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград облаçĕнчи партизансен пĕрлешнĕ темиçе отрячĕ çак кунсенче нимĕçсен 4 гарнизонĕ çине пĕр вăхăтрах пырса тапăннă. Çав операци вăхăтĕнче партизансем 783 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, вăл шутра пĕр полковник пулнă. Совет патриочĕсем нимĕçсен боеприпассем хунă 3 складне тата горючин икĕ складне сирпĕнтерсе янă, 4 танкне, 2 автомат-туппине, грузсем тиенĕ автомашинине, 700 снарядне пĕтерсе тăкнă. Партизансем нимĕçсенне станковăй пулемет, 3 ручной пулемет, 8.800 патрон, 100 ытла винтовка тата 200 яхăн граната тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 268-мĕш пехотнăй дивизийĕн противотанковăй дивизионĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Карл Шнихк çапла каласа панă: «Эпĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне килсе çитни пĕтĕмпе те виçĕ кун кăна иртрĕ, мартăн 30-мĕшĕнче эпĕ тыткăна парăнтăм. Фронта ăсатас умĕн эпĕ 14 кун хушши Берлинра пултăм. Берлинри лару-тăру питех те лăпкă мар. Халăх выçă ларать, квалификацисăр рабочисемпе салтаксен çемьисене уйрăмăнах йывăр лекет. Юлашки вăхăтра мобилизацисем туса ирттернине пула, рабочисем çитменни уйрăмах çивĕччĕн палăрать. Влаçсем заводсенче ĕçлеме инвалидсемпе хĕрарăмсене вăйпах ăсатаççĕ. Берлин урамĕсенче çĕрле такамсем «Тĕп пултăр Гитлер!», «Тĕп пултăр вăрçă!» текен лозунгсем çырнă листовкăсем çыпăçтарса тухаççĕ. Халăх çав лозунгсем çине кăмăлласа пăхать».

* * *

Кривой Рогри шахтăсенчен пĕринче, нимĕçсем руда кăларас ĕçе организацилеме хăтланнăскерĕнче, çак кунсенче питех те вăйлăн взрыв пулнă. Унта нимĕçсен 12 офицертан тата специалистсенчен тăракан комиссийĕ пĕтнĕ.

* * *

Уралри заводсенчен пĕринче слесарь-механик Бирюков юлташ ятарласа штамп туса хатĕрленĕ, çав штамппа усă курса вăл хăйĕн производствăлла нормине 2.580 процент тултарнă.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитетĕнче

I.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ÿстересси çинчен» постановлени йышăнnă.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çакна палăртнă: колхозниксем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне, 1939 çулта йышăннăскерне, колхозниксен нумайрахĕш пайĕ тултарса тата ытлашшипех ирттерсе тултарса пырать.

Çакна шута илсе тата колхозсенчи ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра туса ирттерес шутпа, çавна май колхозсене пысăк тухăçлă тырпул туса илме тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине малалла вăйлантарса пыма май туса парас шутпа, колхозниксене вара ĕçкунĕсем çине натурăпа тата укçан пысăкрах тупăшсем илме май туса парас шутпа, çавăн пекех çĕршывпа Хĕрлĕ Çара çителĕклĕ таранах продовольстви туса парас шутпа, çакă вăл нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçă обстановкинче уйрăмах пахха вырăн йышăнса тăнине асра тытса, ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ çапла йышăннă:

1. Кашни ĕçлеме пултаракан колхозникпе колхозница çулталăкра ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне вăрçă вăхăчĕ валли çакăн чухлĕ ÿстерес:

а) çĕрмамăкĕ акса тăвакан районсенче—150 ĕçкунне çити;

б) Мускав, Ленинград, Иваново, Ярославль, Горький, Калинин, Вологда, Тула, Рязань, Смоленск, Архангельск, Мурманск, Киров, Молотов, Свердловск, Чита облаçĕсенче, Хабаровскпа Приморье крайĕсенче, Карел-финн ССР-ĕнче, Мари, Якут АССР-ĕсенче тата СССР Наркомземĕн спискĕ тăрăх палăртнă тĕштырă акса тăвакан тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен сĕртлĕ-тулăлă районсенче—100 ĕçкунне çити;

в) ССР Союзĕн ытти мĕнпур районĕсенче—120 ĕçкунне çити ÿстерес.

2. Ялхуçалăхĕн пур тапхăрти ĕçĕсене те—çĕре сухалас, тырă акса хăварас, акнă тырăсене пăхса ÿстерес, утă çулас, уйхиртен тырпул пухса кĕртес, çавăн пекех тата выльăх-чĕрлĕхсене пăхса усрас ĕçсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пырас шутпа, обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсенчен кашни колхозникĕн тата колхозницăн уйрăм тапхăрсенче çакăн чухлĕ ĕçлесе илмелле тăвас:

а) çĕрмамăкĕ акса тăвакан районсенчи колхозсенче—майăн 15-мĕшĕнчен 30 ĕçкунĕнчен кая мар, майăн 15-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 1-мĕшне çитиччен—45 ĕçкунĕ, сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа ноябрĕн 1-мĕшне çитиччен—45 ĕçкунĕ, ытти ĕçкунĕсене ноябрĕн 1-мĕш хыççăн ĕçлесе илме пултараççĕ;

б) иккĕмĕш группăра тăракан облаçсемпе крайсенчи тата республикăсенчи колхозсенче июнĕн 1-мĕшчен 25 ĕçкунĕнчен кая мар, июнĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа августăн 1-мĕшне çитиччен—25 ĕçкунĕ, августăн 1-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 1-мĕшне çитиччен 35 ĕçкунĕ, ытти ĕçкунĕсене октябрĕн 1-мĕш хыççăн ĕçлесе илме пултараççĕ;

в) виççĕмĕш группăра тăракан облаçсемпе крайсенчи тата республикăсенчи колхозсенче июнĕн 15-мĕшне çитиччен 30 ĕçкунĕнчен кая мар, июнĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа августăн 15-мĕшне çитиччен—30 ĕçкунĕ, августăн 15-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 15-мĕшне çитиччен — 40 ĕçкунĕ, ытти ĕçкунĕсене октябрĕн 15-мĕш хыççăн ĕçлесе илме пултараççĕ.

3. Союзлă тата автономиллĕ республикăсен Совнаркомĕсене, крайсемпе облаçсен исполкомĕсене ялхуçалăх ĕçĕсен тапхăрĕсенче ĕçлесе илме тивĕçлĕ ĕçкунĕсен хисепне, вырăнти условисене кура, уйрăм районсене 20 процентран иртмесĕр ÿстерсе е чакарса пама права парас.

4. Колхозниксен çемьисен членĕсем—12 çултан пуçласа 16 çула çитиччен ачасем обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне çулталăкне 50 ĕçкунĕнчен кая мар тăвас. Колхозсене çул çитмен çамрăксене ĕç кĕнекисем пама тата çул çитмен çамрăксем ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсене уйрăммăн шута илсе пыма хушас.

5. ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕ 1942 çулти февралĕн 15-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх, обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне ялхуçалăх ĕçĕсен тапхăрĕсенче нимĕнле сăлтавсемсĕрех тултарса пыман колхозниксене суда памалла тăвас, халăх сучĕн приговорĕ тăрăх, çавăн пек колхозниксене колхозра ултă уйăха çити срокăха юсанмалли ĕçре ĕçлеттерессĕ, вĕсен ĕçкунĕсем çине тухакан тупăшран 25 процента çити тытса юлса колхоза параççĕ.

Колхозсене çакăн пек тума хушас: ĕçлеме пултаракан колхозниксемпе колхозницăсене, çулталăк хушшинче обязательнăй йĕркепе ĕçлесе тумалли ĕçкунĕсен минимумне тултарманскерсене, колхозран тухса ÿкнĕ тесе шутламалла, вĕсем колхозникĕн прависене çухатаççĕ тата вĕсенчен пахча участокĕсене те туртса илеççĕ.

6. Халăх сучĕсене 5-мĕш пунктра кăтартнă мĕнпур ĕçсенĕ вунăкунлăх срокран кая хăвармасăр пăхса тухма тата çав ĕçсем тăрăх йышăннă приговорсене çийĕнчех пурнăçа кĕртме хушас.

7. Ĕçкунĕсен минимумне ĕçлесе тытман колхозниксене суда парассинчен пăрăнăшăн колхоз правленийĕсен председателĕсене тата бригадирĕсене суд умĕнче ответ тыттараççĕ.

II.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе колхозсемпе совхозсене тата МТС-сене пулăшма хуласенчи тата яллă вырăнсенчи халăха мобилизацилесси çинчен» постановлени йышăннă.

1. Союзлă тата автономиллĕ республикăсен Совнаркомĕсене, крайсемпе областъ исполкомĕсене 1942 çулти ялхуçалăхĕн чи хĕрÿллĕ тапхăрĕсенче колхозсемпе совхозсенче тата МТС-сенче ĕçлеме мобилизаци йĕркипе çакăн пек çынсене явăçтарма ирĕк парас:

а) хуласемпе яллă вырăнсенчи ĕçлеме пултаракан çынсене, промышленноçпа транспорт предприятисенче ĕçлеменнисене;

б) государство, кооперации учрежденийĕсенче тата обществăллă учреждениисенче, пуринчен малтан, Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе Совхозсен Халăх Комиссариачĕн органĕсенче ĕçлекен служащисенчен пĕр пайне, анчах та учрежденисен ĕçне чăрмантармасăр, ĕçе явăçтармалла;

в) ялсемпе хуласенчи туллимар вăтам тата вăтам шкулсенчи 6 — 10-мĕш классенче вĕренекенсене, техникумсемпе аслă шкулсенчи студентсене, аслă шкулсенчи кăçал вĕренсе тухакан студентсемсĕр пуçне, явăçтармалла.

2. Ĕçлеме пултаракан халăхпа служащисен шутĕнчен ялхуçалăх ĕçĕсене арçынсене—14 çултан пуçласа 55 çула çитиччеххисене, хĕрарăмсене — 14 çултан пуçласа 50 çула çитиччеххисене мобилизацилемелле тăвас. Кăкăр ĕмекен ачаллă хĕрарăмсем, çавăн пекех тата 8 çула çитмен ачасем пур пулсан, вĕсене пăхаканни çемьере урăх никам та çук пулсан, çавăн пек хĕрарăмсем мобилизацирен хăтăлаççĕ.

3. Туллимар вăтам тата вăтам шкулсенче вĕренекенсене ялхуçалăх ĕçĕсене арçын ачасемпе хĕрачасене уйрăммăн группăсем тăрăх уйăрса ямалла, вĕсене шкулсенчи учительсен ертсе пымалла. Шкулта вĕренекенсем ялхуçалăх ĕçĕсенче, ачасем миçе çултине тата ĕç мĕнлине кура, 6 е 8 сехет ĕçлемелле тăвас.

4. Мобилизацие союзлă тата автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсем, крайсемпе облаçсен исполкомĕсем ялхуçалăх ĕçĕсен уйрăм тапхăрĕсем тăрăх çирĕплетнĕ срокăха туса ирттереççĕ. Çакăн пек йĕрке пулмалла: шкулсемпе техникумсенче тата аслă шкулсенче вĕренекенсене ялхуçалăх ĕçĕсене вĕренÿри занятисенчен пушаннă çуллахи вăхăтра явăçтараççĕ.

5. Ялхуçалăх ĕçĕсене мобилизациленĕ çынсене колхозсемпе совхозсене тата МТС-сене колхоз правленийĕсем, совхозсемпе МТС-сен директорĕсем панă заявкăсем тăрăх яраççĕ, мобилизациленĕ çынсем вырăна çитсен колхоз правленийĕсен, совхозсемпе МТС директорĕсен распоряженийĕнче пулаççĕ, вĕсен хăйсем патне ялхуçалăх ĕçĕсене тума пынă çынсене пурăнмалли çуртсем тупса памалла. Колхоз правленийĕсем е совхозсемпе МТС директорĕсем, ĕçе кура, хăйсем патне пынă çынсене колхозри е совхозпа МТС-ри халличчен пулнă бригадĕсемпе звеносене кĕртеççĕ е вĕсенчен уйрăм звеносем тăваççĕ. Колхозсене, совхозсемпе МТС-сене ĕçлеме пынă çынсем вырăнти шалти йĕркесен правилисене пăхăнаççĕ.

6. Ялхуçалăх ĕçĕсене мобилизациленĕ çынсене совхозсемпе МТС-сенче ĕçленĕшĕн унти нормăсемпе расценкăсем тăрăх совхозсемпе МТС-сенчи рабочисене тÿленĕ пекех тÿлеççĕ. Ялхуçалăх ĕçĕсене мобилизациленĕ çынсене колхозсем хăйсем патĕнче ĕçленĕшĕн вырăнти ĕç нормисем тăрăх ĕçкунĕсем шутласа параççĕ, ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсемшĕн колхозниксене тÿленĕ пекех укçан тата натурăпа тÿлеççĕ. Ялхуçалăх ĕçĕсене мобилизациленĕ çынсемпе ĕçкунĕсем тăрăх татăклă расчет çулталăк вĕçленсен тăваççĕ. Татăклă расчет тăвиччен колхоз правленийĕ ĕçлесе илнĕ ĕçкунĕсемшĕн ĕçлекенсене колхозăн производствăллă планĕ тăрăх палăртнă ĕçкунĕ хакĕнчен 50 процент чухлĕ аванс парать.

7. Колхозсен, совхозсен тата МТС-сен хăйсем патне ĕçлеме пынă çынсене пĕрле апатлантармалла туса памалла. Апат-çимĕçе вырăнта тунă хакпа памалла, анчах та вăл хак коопераципе государство суту-илĕвĕн хакĕсенчен иртсе каймалла мар, колхозсенче пĕрле апатланнă çĕре парса пынă çăкăра ĕçкунĕсем тăрăх татăклă расчет тунă чухне натурăпа тытса юлмалла.

8. Ялхуçалăх ĕçĕсене мобилизациленĕ служащисен ĕçукçине вĕсем хăйсем служба тăнă вырăнта окладăн 50 процентне сыхласа хăвармалла, техникумсемпе аслă шкулсенче вĕренекенсем валли вĕсем илекен стипендие сыхласа хăвармалла.

Чугунçулпа е шывçулĕпе килнĕшĕн те, кайнăшăн та колхозсем, совхозсем тата МТС-сем ĕçлекенсене килме-кайма тĕрĕссипе мĕн чухлĕ тăнă хакпа тÿлеççĕ.

9. Ялхуçалăх ĕçĕсене мобилизацилессине союзлă тата автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсем, крайисполкомсемпе облисполкомсем, вырăнсенчи, районсенчи, поселоксемпе ялсенчи советсем йышăннă постановлени тăрăх туса ирттереççĕ.

10. Ĕçлеме пултаракан халăха ялхуçалăх ĕçĕсене мобилизацилессине практикăра пурнăçа кĕртме тата мобилизациленĕ çынсене колхозсене, совхозсемпе МТС-сене организованно яма союзлă тата автономиллĕ республикăсен совнаркомĕсем çумĕнче, крайсемпе облаçсен исполкомĕсем çумĕнче отделсем тумалла, вĕсене ертсе пыма отделăн начальникне уйăрса лартмалла; çав отделăн начальникĕ союзлă е автономиллĕ республикăн совнарком председателĕн заместителĕн, крайисполкомпа облисполком председателĕн заместителĕн прависемпе усă курать, районсенче вара райисполкомсем çумĕнче мобилизацине ĕçлекен заведующи уйăрмалла.

11. Пĕрремĕш параграфăн «а» тата «б» пункчĕсенче кăтартнă çынсенчен ялхуçалăх ĕçĕсене мобилизацилессинчен пăрăнакансене е ялхуçалăх ĕçĕсенчен хăйсен ирĕкĕпе пăрахса кайнисене уголовнăй йĕркепе ответ тыттармалла тăвас тата, халăх сучĕ йышăннă приговор тăрăх, вĕсем хăйсем пурăннă вырăнта, вĕсен ĕç укçинчен 25 процентне тытса юлмалла туса, ултă уйăха çити срокăха ирĕксĕр ĕçлеттермелле тăвас.

Гитлерăн тарçи—Виши правительствин пуçĕнче

Петэнпа унăн компанийĕ гитлеровецсем умне чĕркуçленсе ларни

ЖЕНЕВА, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Германин информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Лавале Виши правительствин премьер-министрĕ пулма уйăрса лартнă. Петэн «государство пуçĕ» пулса юлать, Дарлан çарпа флот тата авиаци руководителĕ пулать, анчах ăна министр ятне памаççĕ. Çапах та вăл министрсен совечĕн ларăвĕсенче ялахах пулма пултарать тата «государство пуçĕн» преемникĕ ятне илет. Çар министерстви пулмасть, ăна пĕтереççĕ. Министрсен кабинечĕн составĕ çинчен татăклах калаçса татăлман-ха, вĕсен кандидатурисене Лаваль суйлать. Правительство малашне те Виши хулинчех юлать.

Женевăри журналистсем хушшинче çапла кăтартса параççĕ: Виши правительствине «реорганизацилени» Петэн Германин ультиматумлă требованийĕсене пĕтĕмпех парăннине пĕлтерет. Германия Виши правительствин составне хăйĕн шанчăклă агентне—Лавале кĕртме ыйтнă, мĕншĕн тесен Виши правительстви пуçĕнче Лаваль тăрсан, Франципе Германи пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлесси шанчăклăрах пулать, урăхла каласан, Франция пуçĕпех Германие пăхăнать, вăл Гитлерăн вăрçă планĕсене пурнăçа кĕртме пулăшса пыракан оруди пулса тăрать.

Виши правительствине «реорганизацилесси» çинчен калаçусем таçантанпах пынă. Петэнпа ăна çывăх çынсем халăха вĕсем Германин требованийĕсене йышăнман пек кăтартма тăрăшнă, мĕншĕн тесен влаçа Гитлер çынни аллине пама ыйтнине уççăнах йышăнсан, çĕршыври ахаль те çивĕч ларутăру талах та ытларах çивĕчленсе кайсан, халăх пушшех те тарăхса кайса тем туса тăкасран шикленнĕ вĕсем. Çавăнпа пĕрлех Петэн правительстви, Берлинран тухакан приказсене пăхăнмасăр ĕçленĕ пек туса, хăйне хăй ирĕклĕ политикăна тытса пынă пек кăтартса, (Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе Франци хушшинчи дипломатиллĕ лайăх çыхăнусене çухатасшăн пулман, мĕншĕн тесен Америкăпа туслă пурăнни Францие экономика тĕлĕшĕнчен пите те усăллă пулнă. Анчах та Гитлер хăйĕн требованийĕсене пурнăçа кĕртме татăклă приказ евĕрлех хушнă. Вара Петэн ватă пуçне тайсах парăннă, влаçа пĕтĕмĕшпех Лаваль аллине панă. Женевăра Виши правительствине «реорганизациленине» çав «правительствăна» пуçĕпех Гитлер енне çавăрса тăратас ĕç вĕçленни пулса тăрать тесе шутлаççĕ.

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Лондонра тухса тăракан «Франс» хаçатра статья пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: «Гитлер хăй приказне уççăнах пачĕ. Петэн ăна парăнчĕ. Лаваль Виши правительствине унăн чăн-чăн хуçи пек пулса таврăнать. Виши правительствин кризисне Германи генералĕсем туса хучĕç пулмалла. Вĕсем çапла майпа хăйсен пырра тăракан çарĕсен хăрушсăрлăхне хÿтĕлеме шутлаççĕ, Францие вĕтмен ĕçсем сиккесе тухас пулсан, хатĕр тăма ĕмĕтленеççĕ».

Лондонри радио, Лавале премьер-министра лартнине ăнлантарса панă май, çапла калать: Лаваль влаçа хăй аллине Франци халăхĕн шухăшне пусмăрласа илчĕ, Франци халăхĕ Лаваль правительствăна тавăрăннипе никçан та килĕшес çук. Курăнсах тăрать, Петэн пуçане вырăнне кăна тăрса юлнă. Халĕ власть Лаваль аллине куçнă хыççăн, Виши правительстви ĕçĕсене ăнланса илес тесен, мĕнпур сăлтавсене те Берлинра кăна шырас пулать. Лаваль Германи интересĕсемшĕн тăмасть тенине союзлă çĕршывсенче пĕринче те никам та ĕненмест. Пуçĕпех те паллă, Лаваль—Германи агенчĕ, урăх никам та мар.

ЖЕНЕВА, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Пĕлекен çынсем каланă тăрăх, «Журналь офисиаль» хаçатра Виши правительствин Риомри процесăн ĕçне палăл мар вăхăта куçарнине ăнлантарса панă декретне пичетлени вăл — Виши правительстви Берлин умĕнче тепĕр хут пите те намăсла капитуляци туни пулать. Пурте пĕлеççĕ, Риомри комедие Гитлер приказĕ хушнă тăрăх пуçласа янă. Гитлер шутланипе, Риомри процесс хальхи вăрçă пуçланса кайнишĕн никам та мар, Франция айăплине кăтартса памалла пулнă. Анчах та судра ĕçсем, ăна организацилекенсене пăхмасăрах, урăх йĕрпе кайрĕç. Суд следствийĕнче Франциåре пуç пулса тăнă капитулянтсемпе пораженецсен ушкăнĕн, уйрăмăнах çар ĕçĕн руководствинче тăнă çынсен предательле ĕçĕсем уççăнах палăрма тытăнчĕç.

Нимĕçсен фашистла пичечĕ Риомри процесс вăхăтĕнче Виши правительствине пĕрре мар, темиçе хутчен те çакна кăтартса пачĕ: суд процесĕн ĕçне урăх йĕрпе ямалла, айăпланакансене Франция вăрçа çителĕклĕ хатĕрленсе çитменнишĕн мар айăпламалла, çав çынсем Францие вăрçа кĕртсе янă тесе айăпламалла.

Вишишрен пĕлтернĕ тăрăх, Петэнпа унăн компанийĕ Германин Францие çавтери мăлкăл тăвакан çĕнĕ требованине те пурнăçа кĕртме килĕшнĕ. Процеса паллă мар вăхăта хăварнă, çĕнĕрен следстви пуçланса каймалла. Процеса паллă мар вăхăта хăварни çинчен кăларнă декретра тата юстици министрĕн Бартелемин докладĕнче çапла каланă: çĕнĕ следстви «айăплĕ саманаран вăрçа кĕрсе каяс тĕлĕшпе тунă ĕçсемшĕн кам ответлă пулнине пур енчен те уççăн палăртса памалла»,—тенĕ.

Бартелеми докладĕнче çавăн пекех тата çапла каланă: суд умĕнче халĕ айăпланса тăракансемсĕр пуçне «тата ытти сен те нумайĕшĕн айăплĕ саманаран вăрçа кĕрсе каяс тĕлĕшпе, кайран çĕршыва катастрофăна кĕртсе ярас тĕлĕшпе тунă ĕçсемшĕн хăйсене тивекен айăпа кура ответ тытмалла пулать», тенĕ.

Уэллес заявленийĕ

ВАШИНГТОН, апрелĕн 16-мĕш. (ТАСС). Пичет представителĕсемпе калаçнă чухне государственнăй секретарь ĕçĕсене туса тăракан Уэллес çапла каланă: ку тараничен этĕ Америкăн Вишири посолĕнчен Легиран малтанлăха панă сведенисене кăна илнĕ-ха, çавăнпа та Вишири ĕçсем мĕнле пулса пынине ăнлантарса пама пултараймастăп, çавăн пекех тата çав ĕçсене кура Америкăн политики мĕнле пулассине те çутатса параймастăп, тенĕ. Çапах та Уэллес çапла кăтартса панă: Америка правительстви Францин Çурçĕр Африкинчи владенийĕсене, ларутăру лайăххрах палăрасса кĕтсе, таварсем ярас ĕçе парса пынă.

Малалла Уэллес çапла каланă: Лаваль кабинечĕн составĕ çинчен тĕплĕн пĕлтерекен сведенисем илсенех, (Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем хăйсен политикине халăха пĕлтерĕç, тенĕ.

Германин Францири оккупациллĕ çарĕ арканса пыни

ЛОНДОН, апрелĕн 15-мĕш. (ТАСС). Англие халĕ çеç пĕр пĕчĕк кимĕпе пырса çитнĕ француз-салтак пичет представителĕсене çапла каласа панă: Францин оккупациленĕ зонинче халĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче шăнса пăсăлса килнĕ нимĕç салтакĕсене пинĕ-пинĕпе курма пулать. Нимĕçсен гарнизонĕсене чылаях чакарнă. Малалла çав салтак çапла каланă: оккупациллĕ çарта салтаксен чун-хавалĕпе шухăш-кăмăлĕсем питех те пусăрăнса, çивĕчленсе çитнĕ. Нимĕç салтакĕсем хăйсемпе çеç калаçнă чухне час-часах çапла калаççĕ: вăрçă та, Гитлерăн пĕтĕм режимĕ пекех, нимĕç халăхне мăй таранах йăлăхтарса çитерчĕ ĕнтĕ, теççĕ.

27 француз-антифашист ĕçĕ пирки йышăннă приговор

ЖЕНЕВА, апрелĕн 16-мĕш. (ТАСС). Вишишрен пĕлтернĕ тăрăх, военнăй трибунал 27 француз-антифашист ĕçĕ пирки приговор йышăннă. Ку процесс темиçе кун хушши пынă. 25 çынна асаплантарса вĕлермелле тунă. Хĕçпăшал тытнăшăн айăпланакан Лефебра 5 çуллăха тĕрмене хупса лартмалла тунă, 15 çулти Киршена 10 çуллăха тĕрмере хупса усрамалла тунă.

Англи истребителĕсен ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 16-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 15-мĕшĕнче кăнтăрла Англи истребителĕсем çурçĕр Франци çине вĕçсе пыра-пыра тапăннă. Çав тапăнусенчен пĕринче «Харрикейн» истребительсем противникăн аэродромне атакăласа бомбăсем пăрахнă.

Лавале Виши правительствин пуçĕ туса хуни çинчен США-ра мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 16-мĕш. (ТАСС). Лавале Виши правительствин пуçĕ туса хунине Америкăри пичет Виши Германи умĕнче пĕтĕмĕшпех капитуляци туни пулса тăрать тесе хаклать. Хаçатсемпе радио Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Виши тĕлĕшпе çирĕп позици йышăнмалла тесе ыйтаççĕ. «Сэн» хаçат: Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен малашне Виши правительствин ĕçĕсене Берлин хушнă тăрăх туса пыракан ĕçсем вырăнне хурса хакламалла, тесе çырать, хаçат малалла Америкăн посолне Легине Вишишрен чĕнсе илме çине тăрсах ыйтать.

«Берлин Вишине хăй аллипе тытмалать», тесе çырать «Нью-Йорк пост» хаçат. Хальхи вăхăтри çивĕчленсе çитнĕ лару-тăрура Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен кĕтсе тăмалли политика тытса пымалла мар, Америкăн Виши тĕлĕшпе хăйĕн политикине улăштармалла тата Францин Караиб тинĕсĕнчи утравĕсене, çавăн пекех тата Мадагаскара оккупацилемелле, тесе шутлать хаçат.

Çавăн пекех тата «Вашингтон пост» хаçат та Виши тĕлĕшпе çирĕп политика тытса пыма сĕнет.

Хаçатсем Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен ирĕклĕ Францин де Голль пуç пулса тăракан национальнăй комитетне французсен чăн-чăн правительстви вырăнне хурса йышăнма кирлĕ çинчен çыраççĕ.

Лос-Анжелосра тухакан «Геральд экспресс» хаçат çапла çырать: пĕрлешнĕ çĕршывсен Виши капитуляци тунине хирĕç тивĕçлĕ утăмсем тумалла, уйрăмăнах Гитлер французсен флотне хăйĕн аллине тытса илме кăтартнине пур майсемпе те чăрмантармалла.

Радиокомментатор Рут: Лавале Виши правительствин пуçĕ туса хуни Виши пĕтĕмĕшпех Берлин аллинчи хĕçпăшал пулса тăнине кăтартса парать, тесе пĕлтерет. Виши правительстви гитлеровецсене Францин флотне контрольтуса пыма ирĕк парĕ, тесе шутлать. Рут тата Вишипе тытакан дипломатиллĕ çыхăнусене халех татма ыйтать. Ытти радиокомментаторсем те çавнашкал заявленисемех тунă.

Ассошиэйтед пресс агентстви корреспонденчĕ Вашингтонран панă хыпар тăрăх, лайăх пĕлсе тăракан ушкăнсенче Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсем çывăх вăхăтсенчех хăйсен Вишири посолне Легие каялла чĕнсе илесси çинчен калаçаççĕ.

Тÿрлетни

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ «1942 çулти çуракине вăхăтра ирттерес тĕлĕшпе тумалли мероприятисем çинчен» йышăннă постановленин 4-мĕш пунктне («Чăваш Коммуни», апрелĕн 14-мĕш) çапла тÿрлетсе вуламалла:

«4. Çураки вăхăтĕнче колхозсен лашисене (государство тыррине кусатрас турттарса тухас тĕлĕшпе ирттерекен трудгужповинноççăр пуçне) трудгужповинноçран хăтарас, уйрăмăнах начарланса кайнă лашасене уйхир ĕçĕсем пуçланас умĕн вăйлă апат çине тăратмалла тăвас».

ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ «Чăваш АССР-чи колхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăх-чĕрлĕх хисепне ÿстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленин 8-мĕш пунктне: ĕнесене искусственнăй майпа пĕтĕлентернин процентчĕ 90 процентран пуçласа 95 процента çути пулсан, пĕтĕлентерекен технике 1 тенкĕ те 50 пус тÿлемелле, тесе тÿрлетсе вуламалла.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ÇУРАКИ УМĔН

„Пучах" колхоз çуракине тухма хатĕр мар

ÇĔРПУ. («Чăваш Коммуни» корр.). Пысăк Чăрăшри «Пучах» колхозăн витинче пĕр ырхан лаша тăрать. Ку лашана çуракине тухиччен вăй илме вăйлă апат çине тăратнă. Анчах та лаша умĕнчи вăлашка çинче нимĕнле апат та курăнмасть.

— Пÿтлĕ лаша мар вăл, нумай çиет, апат парса çитерме ĕлкĕрейместпĕр,— ответлет колхозăн старши конюхĕ Василий Григорьев. Вăй илме тăратнă лаша апатсăр выçăхса тăрать.

Григорьев каланă тăрăх, витере тăракан пурă-кăвак лаша пÿтлĕ лаша мар. Вите тулашне уçăлма кăларнă ытти ватă лашасемпе çамрăк тихасем те пÿтлĕ мар-ши вара? Вĕсем те питĕ ырхан, вăрăм çăмлă тата таса мар.

Лашасем ырхан пулни Григорьев каланă пек пÿтлĕ мартан мар, пăхас, вĕсем çине конюхсем чунсăррăн пăхнинчен килет. Вĕсем лашасене кирлĕ пек пăхмаççĕ, вăхăтра шăвармаççĕ, апат памаççĕ. Лашасем тăракан вырăнта ÿркенеççĕ. Лашасем тăракан вырăнта тислĕк купаланса выртать. Ăна эрнирен эрнипех тасатмаççĕ.

Çуракине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа ирттересси лашасем пĕр чарăнусăр ĕçлеме пултарнинчен килет. Çакна пурте ăнлантармасăрах аван пĕлеççĕ ĕнтĕ. Анчах çапах та «Пучах» колхозра лашасене йĕркеллĕ пăхмаççĕ.

Кунпа пĕрлех «Пучах» колхозра ытти çитменлĕхсем те нумай-ха. Колхоз клеверпа вир вăрлăхĕсене хатĕрлемен, 5 плугпа, 8 сÿрене, 10 урапана юсаман. Уйхире 600 лав вырăнне 395 лав кăна тислĕк турттарнă. Çавăн пекех кайăк-кĕшĕк тислĕкне 10 центнер, вăл 30 центнер çеç пуçтарнă. Вĕсене те пĕр çĕре пухса хуман.

Колхоз çуракине тухма хатĕр мар. Çапах та колхоз председателĕ Иван Антонов пăшăрханмасть, «çуркунне чен ĕлкĕрĕпĕр-ха», тесе ĕçе васкатмасть.

Райпотребсоюз çуракине хатĕрленет

ВĂРМАР. Çак кунсенче райпотребсоюз хăйĕн базине ĕççыннисене кулленхи кирлĕ таварсем, вăл шутра табак, супăнь, спичка, чылай турттарса килчĕ. Вăл таварсене сельпосем çураки вăхăтĕнче уйра сутаççĕ. Райпотребсоюз çуракинче уйра ĕçлекенсем патне кайса сутма ятарласа 20 продавец уйăрчĕ. Колхозсем валли 200 станлăх урапа кустăрмисем кÿрсе килнĕ.

Анчах калас пулать, райпотребсоюз руководителĕсен айăпĕпе районри нумай колхозсенче урапа маçĕсемпе тикĕт çук. Райпотребсоюз вĕсене турттарса хатĕрлес енĕпе нимĕн те туман. Кивĕ Вăрмарти «Универсал» промартель иртнĕ çулсенче урапасем сĕрмелли материалсене районри колхозсем ыйтнине тивĕçмелĕхех хатĕрлесе тăнă. Кăçал промартель ку ĕçе хакламан, сĕрмелли материалсем пачах хатĕрлемен.

П. НИКОЛАЕВ.

ТРЕБУЮТСЯ

главные и старшие бухгалтера для работы на периферии и ст. бухгалтера-ревизоры для работы в г. Чебоксарах.

Обращаться: гор. Чебоксары, ул. 15 лет Комсомола, д. № 2, к тов. Честнокову. 4—4.

ЧУВАШПРОМСОЮЗУ
ТРЕБУЮТСЯ

руководитель металлгруппы, руководитель разных промыслов, завхоз.

Адрес: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 6.

ПРИСТАНЬЮ ЧЕБОКСАРЫ

утеряна круглая сургучная печать. Считать недействительной.

ПРИСТАНЬ.

Чувашская контора „ГЛАВКИНОПРОКАТ"

с 20-го апреля

ВЫПУСКАЕТ НА ЭКРАНЫ РЕСПУБЛИКИ

ПЕРВУЮ СЕРИЮ

нового звукового художественно-исторического фильма

„ОБОРОНА ЦАРИЦЫНА"

Авторы сценария и постановки режиссеры лауреаты Сталинской премии братья ВАСИЛЬЕВЫ.

В ГЛАВНЫХ РОЛЯХ

ЛАУРЕАТЫ СТАЛИНСКОЙ ПРЕМИИ:

Артисты-орденоносцы Михаил Геловани, Николай Боголюбов, Заслуженный артист Республики, орденоносец Михаил Жаров, Народный артист Республики, орденоносец Борис Бабочкин, Заслуженная артистка Республики Варвара Мясникова.

Производство Ленинградской Ордена Ленина киностудии «Ленфильм».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, «Ленин çулĕпе» журналăн тата комсомол пурнăç пайĕн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

НТ 1048. Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 269. [illegible]